...ĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
15
ЫТЛАРИКУН
290(6225) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пирĕн войскăсен трофейисемпе противникăн çухатăвĕсем

I. Сталинград патĕнче

Сталинград патĕнче пирĕн войскăсем наступлени тума пуçланăранпа, ноябрĕн 19-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 11-мĕшне çити вăхăтра противникран çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем — 105, танксем — 1.510, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 2.134, минометсем — 1.714, тăвată стволлă зенитнăй установкăсем — 28, пулеметсем — 4.175, противотанковăй пăшалсем — 311, автоматсем — 2.000 ытла, снарядсем — 4.196.000, патронсем — 20.000.000 ытла, автомашинăсем — 7.306, мотоциклсем — 1.385, радиостанцисем — 62, телефон кабелĕ — 522 километр тăршшĕ тата ытти çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ.

Декабрĕн 11-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 6.400 çын чухлĕ ÿснĕ. Ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 11-мĕшне çити вăхăтри çапăçусенче пĕтĕмпе противникăн 72.400 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшпе декабрĕн 11-мĕшĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн войскăсем противникăн 632 самолетне, вĕсенчен 353 транспортнăй самолетне, 548 танкне, тĕрлĕ калибрлă 934 орудине, 1.946 пулеметне, 1.386 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

Çав вăхăт хушшинчех Сталинград патĕнче противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 94.000 ытла салтакпа офицер пĕтнĕ, вĕсенчен пилĕк пайран тăвата пайĕ — нимĕçсем, ыттисем — румынсем.

II. Центральнăй фронтра

Ноябрĕн 25-мĕшпе декабрĕн 11-мĕшĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем — 194, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 550, пулеметсем — 1.053, винтовкăсем — 7.000 яхăн, снарядсем — 300.000 çити, патронсем — 7.126.000, автомашинăсем — 920, радиостанцисем — 58, тĕрлĕ складсем — 43.

Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен 2.100 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Пирĕн войскăсем противникăн 200 ытла самолетне, 416 танкне, 541 орудине, 1000 ытла минометне, 1.230 пулеметне, 850 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, Центральнăй фронтри çапăçусем вăхăтĕнче нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 75.000 ытла салтакпа офицер пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн промколонийĕсен тата ĕçпе тÿрлетмелли колонисен отделĕн (ОИТК) ĕçре уйрăмах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Промышленность продукцине туса кăлармалли заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн промколонийĕсен тата ĕçпе тÿрлетмелли колонисен отделĕн ĕçре уйрăмах палăрнă çак работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Александр Михайлович Бойкова — ОИТК оперативлă отделĕн сотрудникне.
2. Владимир Петрович Бортникова — 2-мĕш номерлĕ ИТК начальникне.
3. Николай Никифорович Ванина — 1-мĕш номерлĕ ИТК-ри парторганизаци секретарьне.
4. Семен Данилович Гвиннакидзене — 2-мĕш номерлĕ ИТК-ри планпа производство пайĕн начальникне.
5. Алексей Парменович Громова — 1-мĕш номерлĕ ИТК-ри фабрика начальникне.
6. Яков Филиппович Ермолаева — Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн помощникне.
7. Николай Андреевич Зотова — 2-мĕш номерлĕ ИТК-ри фабрика начальникне.
8. Михаил Георгиевич Каменские — 2-мĕш номерлĕ ИТК начальникĕн заместительне.
9. Антонина Андреевна Камбуловăна — 2-мĕш номерлĕ ИТК-ри парторганизаци секретарьне.
10. Малакий Георгиевич Кварцхава — ОИТК начальникĕн производство енĕпе ĕçлекен заместительне.
11. Петр Иванович Криваова — 1-мĕш номерлĕ ИТК-ри ВОХР взвочĕн командирне.
12. Иван Григорьевич Макарова — 1-мĕш номерлĕ ИТК-ри хатĕрлев цехĕн мастерне.
13. Павел Яковлевич Малышева — ОИТК-н оперативлă отделенийĕн начальникне.
14. Алексей Иванович Михалина — 1-мĕш номерлĕ ИТК начальникне.
15. Николай Георгиевич Михеева — 1-мĕш номерлĕ ИТК главнăй инженерне.
16. Николай Павлович Новикова — 2-мĕш ИТК-ри вăрман отделенийĕн начальникне.
17. Николай Прокопьевич Прокопьева — 2-мĕш номерлĕ ИТК производствине хатĕрлес енĕпе ĕçлекен начальникне.
18. Василий Иванович Смирнова — ВОХР дивизионĕн комиссарне.
19. Аркадий Матвеевич Соловьева — НКВД-ăн ĕçпе тÿрлетмелли колонисен отделĕн начальникне.
20. Филипп Федорович Федорова — 1-мĕш номерлĕ ИТК начальник заместительне.
21. Павел Борисович Юданова — 1-мĕш номерлĕ ИТК-ри техникăллă контроль отделĕн начальникне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Ялав илнĕ хыççăн

КАНАШ. Ноябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем тăрăх, Канашри вагонсем юсакан заводра Кисляковпа Кавалерчик юлташсем ертсе пыракан цехсем мала тухнă. Çак цехсем ноябрь уйăхĕнче, производствăра кирлĕ материалсене малтанах хатĕрлесе хурса, пĕр пек хăвăртлăхпа ĕçленĕ, талăкри графиксене йĕркеллĕ пурнăçласа пынă. Çавăншăн вĕсене заводри цехсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕсене панă.

Хĕрлĕ ялав илнĕ хыççăн Кисляковпа Кавалерчик юлташсен цехĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техникесем татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне кунран кун ÿстерсе пыраççĕ, двухсотниксем трехсотниксен ретне тăраççĕ. Кавалерчик цехĕнчи слесарьсем Головинпа Божовский юлташсем, нормăна ку таринччен 400 процента яхăн тултарса пынăскерсем, халĕ 500 процент ытла тултараççĕ.

Токарь Карлов юлташăн ĕç тухăçлăхĕ те вĕсенчен кая мар

Пиншер тенкĕ параççĕ

СОВЕТСКОЕ. «Майăн пĕрремĕшĕ» колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 19.730 тенкĕ пухрĕç. Колхозниксем çак ĕç валли пиншер тенкĕ параççĕ. Фронтран аманса таврăннă М. Афанасьев — 700 тенкĕ, фронтовик арăмĕ тата икĕ боецăн амăшĕ П. Волкова — 1.000 тенкĕ панăç.

Шкулсенче танксен «Народный учитель» колоннине тума укçа пухаççĕ. Тури Ачакри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пĕр кун хушшинче 300 тенкĕ пухрĕç. Ку ĕçе уйрăмах 7-мĕш класра вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç.

Е. НИКИТИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Иртнĕ эрнере, декабрĕн 6-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 407 самолетне, çав шутра виçĕ моторлă 225 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 156 самолет пĕтнĕ.

* * *

Декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем противник çине персе тăнă тата разведка тунă. Штурмлакан группăсем нимĕçсене 11 дзотран тата темиçе çуртран хĕссе кăларнă. Противникăн 180 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Пирĕннисем пĕр оруди, 5 пулемет, 17 автомат тата боеприпассем тытса илнĕ. Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн чаçсем малалла куçнă, халĕ вĕсем противникăн оборонин пĕрремĕшпе иккĕмĕш линийри окопĕсенче çапăçаççĕ

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн часть темиçе паха высотана тытса илнĕ. Тăшманăн 50 дзотне ишĕлтернĕ е тытса илнĕ, нимĕçсен 400 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 9 автомашина, 14 станковăй пулемет тата автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен вăйлăлатнă группи противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 12 пулемет тытса илнĕ тата 49 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре гитлеровецсен пехотипе танкĕсем пирĕн Н-ски часть хÿтĕлекен позицисем çине тапăнса пынă. Пирĕн артиллери пенипе вĕсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен нумай вилли выртса юлнă. Противник часах умлăнхыçлăн тата виçĕ хут атака тунă. Нимĕç танкĕсен пĕр группи пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕнĕ. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем тăшманăн 15 танкне персе çĕмĕрнĕ, 7 танкне çунтарса янă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн чаçсем хăйсем йышăннă рубежсене тĕреклетнĕ, хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пехотăн пĕр полк таран вăйĕпе тата танксен пысăк группи пулăшса пынипе, Зубатов юлташ командир пулса тăракан чаçăн позицийĕсене виçĕ хутчен атакăланă. Противникăн пур контратакисене те сирсе янă. 400 салтакпа офицер таран, 4 танк, 7 автомашина тата 2 оруди пĕтсен, гитлеровецсем хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Тепĕр участокра Шевченко юлташ ертсе пыракан подразделени нимĕçсен 7 танкне тата 200 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Великие Луки районĕнче тăшман пехотин пĕр батальонĕ совет подразделенийĕн тылне кĕрсе каяс тесе хăтланса, пирĕн боевой охранение кăштах каялла чакарнă. Пирĕн боецсем меллĕ маневр туса нимĕç батальонне çавăрса илнĕ те ăна пĕтерсе тăкас тесе çапăçаççĕ

* * *

Çурçĕр-Кавказра кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки кунсенче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 44 çынна вĕлернĕ тата телеграфпа телефон линине 4 километр тăршшĕнче пăсса хунă. Унсăр пуçне, партизансем нимĕçсенчен майракаллă выльăхсене 2.027 пуç туртса илнĕ. Тепĕр отрядри партизансем противникпа çапăçса нимĕçсен 25 салтакне тата 3 офицерне вĕлернĕ

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем халăх пурăнакан пĕр пункта гитлеровецсенчен тасатнă. Çурçĕр Осетин АССР Совнаркомĕн представителĕ Тебиев юлташ, ялсовет председателĕ Алагов юлташ, колхозница Пухова юлташ, 3-мĕш рангри интендант Барский юлташ, политрук Богатырев юлташ, гвардин старши лейтенанчĕ Смольняков юлташ тата гварди красноармеецĕ Моршаков юлташ акт çырнă. Çав актра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен каланă. Гитлеровецсем çав ялта мĕнпурĕ те 9 кун çеç хуçаланса пурăннă. Çав кĕске вăхăт хушшинчех вĕсем 12 мирлĕ граждана вĕлернĕ, ялти пур çынсене те çаратса тухнă, вĕсенчен кăшт та пулин паха пек туйăнакан япаласене пурне те туртса илнĕ. Нимĕçсем 110 çулхи хресчене Мисикова хăйĕн çуртĕнчен кăларса янă, унăн çуртне ишĕлтернĕ. Çаратуçăсем Мисиковăн ĕнине, 2 пăрушне, сыснине, 30 пуç кайăк-кĕшĕкне, пĕр тонна тыррине тата тонна çурă çĕрулмине илсе кайнă. Гитлеровецсем Дзогоев колхозникĕн 2 ĕнине, пăрушĕсене, качакине, 30 пуç кайăк-кĕшĕкне, 30 пăт çăнăхне, 40 пăт кукурузине, мĕнпур тумтирĕсене, атă-пушмакĕсене тата вырăн сармалли япалисене туртса илсе кайнă. Нимĕçсем Кудиева колхозницăн çуртне çунтарса янă тата унăн хаклă тирлĕ 2 платьине, одеялне, тÿшек çиттисене тата ытти япаласене те илсе кайнă. Çав актра гитлерла вăрă-хурахсем асап кăтартнă 82 çынпăн ятне çырса хунă. Каялла чакнă чухне бандитсем пурăнмалли çуртсене пурне те тенĕ пекех ишĕлтерсе хăварнă, хăйсем илсе кайма ĕлкĕрейменнине çунтарса янă е пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен блиндажĕсемпе окопĕсенче вырăнти халăхран çаратса илнĕ япаласене — салтаксем вараласа пĕтернĕ одеялсене, минтерсене тата ытти япаласене те тупнă.

Декабрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра совет войскисем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районсенче пирĕн подразделенисем противникăн дзочĕсемпе блиндажĕсене ишĕлтернĕ. Хулан кăнтăр хĕрринче штурмлакан группăсемпе артиллери нимĕçсен 150 çити салтакĕпе офицерне, 3 орудине, 4 минометне тата 7 пулеметнăй точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетнĕ тата противник çине персе тăнă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн икĕ контратакине сирсе янă тата 250 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем çĕр каçа артиллерин 2 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă, 16 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн пехотипе тата танкĕсемпе çапăçнă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотин пысăк группине сапаласа янă, тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕç пехотин икĕ контратакине сирсе янă. Çав çапăçура 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ противникăн контратакисене сирсе тăнă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Бусаров командир пулса тăракан чаçăн боецĕсем тăватă кун хушши çапăçнă хыççăн противникăн темиçе опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче тăшманăн 700 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 75 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ. Пирĕннисем 5 танк, 16 оруди, 72 пулемет, 25 миномет, боеприпассен складне тата автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен пĕр батальон ытла пехоти контратака тунă, пехотăна танксем пулăшса пынă. Малтан противник пирĕн подразделенине кăштах каялла чакарнă. Унтан Н-ски чаçăн боецĕсем, хăйсен вăйĕсене урăхла вырăнаçтарса тăратса, гитлеровецсене вĕсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн артиллеристсем, гвардеец-минометчиксем тата снайперсем пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 168 салтакĕпе офицерне, 15 автомашинине, артиллери батарейине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă

* * *

Минск облаçĕнчи партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем 80 гитлеровеца вĕлернĕ, волость тата полици управисене çунтарса янă, 5 грузовой тата 3 çăмăл автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Смоленск облаçĕнчи партизансем пĕр чугунçул станцийĕнче нимĕç хуралне хĕçпăшалсăрлатнă та станци хуçалăхне аркатнă тата 4 пулемет, 22 винтовка, боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсемпе венгерец ирсĕрĕсем Курск облаçĕпе Орел облаçĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче каламасук тискер ĕçсем туни çинчен хыпар илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, оккупантсем юлашки вăхăтра 40 яла ытла çунтарса янă. Палачсем Курск облаçĕнчи Рясник ялне çунтарса ярса, хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене 57 çынна персе вĕлернĕ. Орел облаçĕнчи Карловка ялĕнче тискерленсе кайнă гитлеровецсем унти çынсене пурне те тенĕ пекех вĕлерсе пĕтернĕ. Невдольск ялĕнче фашистла ирсĕрсем 19 мирлĕ çынна персе пăрахнă тата колхозниксен 137 çуртне çĕмĕрсе пĕтернĕ е çунтарса янă.

Елчĕк районĕнчи „Марс“ колхозра çураки валли вăрлăхсем хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозăн правленийĕпе пуçламĕш парторганизаци колхоза организаципе хуçалăх енĕпе малалла тĕреклетсе пырас тĕлĕшпе вăрçă условийĕсенче пысăк ĕç туса иртнĕ. «Марс» колхоз республикăри малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать, вăл кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлерĕ, государствăна тырпул, пахча-çимĕçсем, çĕрулми, аш-какай, сĕт тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ, 1943 çулшăн аванс шучĕпе аш-какай тата сĕт пама тытăнчĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕ, выльăхсене пурне те ăшă витесенче усраççĕ, вĕсем валли çителĕклĕ апат хатĕрленĕ.

Çапах та, пур майсем те пур пулин те, колхоз халиччен çураки валли вăрлăхсем хатĕрлес ĕçе тытăнман-ха. 1942 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне хывса хăварас плана пĕтĕмпе те 20 процент кăна тултарнă. Выльăх апачĕ тума акмалли тата пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсем пачах та çук, вăрлăхсене тасатса сортлас ĕçе организацилемен, вăрлăх тасатмалли машинăсене юсаман, вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе ĕçлеме бригадăсем туман, вăрлăхсен пахалăхне вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисенче тĕрĕслеттермен.

Вăрлăх хатĕрлес ĕç çакăн пек начар пулса пыни акă мĕнрен килнĕ: колхозăн правленийĕ тата пуçламĕш парторганизаци çураки валли вăрлăхсем вăхăтра хатĕрлесе хуни питех те кирлине шута илмен, вăрлăхсене хатĕрлес тĕлĕшпе халь пек начар ĕçлени çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçре пысăк чăрмав кÿме пултарнине, тата колхоз хуçалăхне хавшатнине ăнланман.

ВКП(б Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнать:

1. «Марс» колхозри пуçламĕш парторганизацине çураки валли вăрлăхсем хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен пуçламĕш парторганизацин пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче сÿтсе-явма хушас.

2. 1942 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр, кашни культура тăрăх уйрăмăн вăрлăх тата страховой фондсене пĕтĕмĕшпех хывса хăвармалла, çакна май пăрçа йышши культурăсем, выльăх апачĕ тума акмалли тата пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсене, вĕсем çитмеççĕ пулсан, ытти колхозсенче улăштарса илес е сутăн илес ĕçе организацилемелле.

3. Вăрлăх тасатмалли пур машинăсене те юсаса çитермелле, вĕсене талăкĕпех ĕçлеттермелле, çак ĕç валли ятарласа бригадăсем тумалла. Çураки валли вăрлăх хатĕрлес ĕçе 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса пĕтермелле.

4. Колхоз правленине çапла тума хушас: хывнă вăрлăхсен пахалăхне халех вăрлăх тĕрĕслекен лабораторире тĕрĕслеттермелле, вĕсене сыхласа усранине тивĕçлипе тĕрĕслесе тамалла, çавăн пекех тата вăрлăх склачĕсемпе амбарĕсене тĕплĕн сыхласа тăрас ĕçе организацилемелле.

5. Вăрлăх участокĕсен тухăçлăхĕ ытла пысăках маррине палăртса, колхоз правленине вăрлăх участокĕ валли чи лайăх çĕр уйăрса пама сĕнес, вăл çĕре бригадăсемпе звеносене çирĕплетсе памалла, акма чи лайăх вăрлăх суйласа хатĕрлемелле, агротехникăллă мероприятисене вăхăтра туса ирттерсе, вăрлăх участокĕсен тухăçлăхне татăкланах ÿстерме тăрăшмалла. Колхозра пахча-çимĕç культурисен вăрлăхне туса илес ĕçе организацилемелле, çавăнпа та вăрлăхлăх лартма хатĕрленĕ кишĕре, купăстана тата ытти пахча-çимĕç культурисене 1943 çулхи çуркунне лартмашкăн сыхласа усрама халех хурас пулать.

6. Чăваш АССР Наркомземне çапла тума хушас: республикăри «Марс» колхоз пек малта пыракан колхозсене уйрăм учета илмелле тата вĕсен ĕçне хăйĕн тĕрĕслесе тăмалла, вĕсенче «Марс» колхозри пек уйрăм çитменлĕхсем пулмалла мар тумалла. Малта пыракан колхозсен опытне республикăри ытти колхозсенче сармалла.

7. ВКП(б) Елчĕк райкомне, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçе вĕçленĕ хыççăн, районри колхозсен председателĕсене пухса, «Марс» колхозăн ĕçне опычĕсем çинчен колхоз председателĕн Гаязов юлташăн докладне итлеме хушас.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. ЧАРЫКОВ

Республикăри МТС-сенче тракторсене юсас ĕç декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА

(Процентпа)

МТС-сем	Капитальнăй ремонт	Текущи ремонт	Тракторсене юсас плана пурнăçланă
Шăхасан	33,3	175,0	114,2
Елчĕк	114,2	106,2	106,6
Куславкка	80,0	92,3	88,8
Канаш	50,0	100	76,9
Шупашкар	40,0	90,9	75,0
Тăвай	50,0	81,8	70,5
Ишлей	75,0	66,6	70,0
Вăрмар	50,0	78,5	68,1
Йĕпреç	50,0	77,7	66,8
Первомайски	100	57,1	66,6
Чкаловски	50,0	71,4	65,0
Элĕк	66,6	54,5	58,8
Комсомольски	50,0	57,1	54,5
Пăрачкав	11,1	75,0	52,0
Красноармейски	71,4	27,2	44,4
Çĕрпÿ	25,0	53,8	42,8
Сĕнтĕр	20,0	50,0	41,1
Хĕрлĕ Чутай	100	—	40,0
Кувакино	40,0	40,0	40,0
Вăрнар	60,0	15,3	34,7
Çĕмĕрле	50,0	28,5	33,3
Шăмăршă	—	57,1	33,3
Сĕнтĕрвăрри	—	40,0	25,0
Улатăр	14,2	18,1	16,6
Етĕрне	—	20,0	14,3
ЧАССР тăрăх	47,3	64,4	58,2
Декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	42,1	59,2	53,1

Массăллă ăнлантарулла ĕçе большевикла туса пынă çĕрте

Элĕк районĕнчи агитколлективсем Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революцин 25 çул тултарнă çинчен тунă докладне тата ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказне колхозниксене [illegible] ăнлантарассĕ. Ноябрĕн 9-мĕшĕнчен 25-мĕшĕ хушшинче Сталин юлташăн докладне тата приказне пурĕ 9.383 колхозника ăнлантарса панă. Пулса иртнĕ пухусенче [illegible] колхозниксем фронта çĕршыва пĕтĕм вăйпа, лайăх ĕçлесе пулăшма тупа турĕç.

Çĕршыв умĕнчи обязательствисене [illegible] пурнăçласшăн тăрăшса, çав йышăн 60 колхоз фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра авăн çапса пĕтерчĕ, 13 колхоз государство умĕнчи парăмĕсене пĕтĕмпех парса татрĕ. Молотов ячĕпе тăракан, «Комсомолец», «Сунтал», «Комбайн» колхозсем çирĕмкунлăхра тырă çапмалли плана 248 процент тултарчĕç, авăна 5 кун хушшинче çапса пĕтерчĕç.

Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра пулнă ĕçри çĕкленӳ халĕ татах вăйланса пырать. Колхозниксем тырпулсене çапса пуçтарас ĕçе çак кунсенчех вĕçлессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне район авăн çапмалли плана 98,9 процент, государствăна тырă памалли плана 84 процент тултарчĕç.

Вырăс Сорма ялсоветĕнчи агитколлектив (руководителĕ Морозова юлташ) массăллă ăнлантарулла ĕçе колхозниксен кулленхи ĕçĕпе аван çыхăнтарса пырать. Агитаторсем колхозниксемпе пĕрле кулленех кĕрӳ ĕçре. Вĕсем хăйсен ĕçĕпе колхозниксене тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ, колхозăн пĕтĕм вăйне умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçе хураççĕ.

Сталин юлташăн докладне ăнлантарса панă хыççăн «Красная Сорма» колхоз ик-виçĕ кун хушшинчех авăн çапса пĕтерчĕ. Государствăна тырă срокчен парса татрĕ. Çавăн пекех «Доброволец», «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем те хăйсен ĕçне нумай хут лайăхлатрĕç, тырпулсене çапса пуçтарса, государство умĕнчи парăмĕсене срокчен парса татрĕ.

Совет Союз Геройĕн Ефимов юлташăн ячĕллĕ ял çыннисем — «Доброволец» колхоз членĕсем — хăйсен пĕтĕм ĕçне фронта вăйлăн пулăшассипе çыхăнтарса пыраççĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума вĕсем 22.500 тенкĕ укçа пачĕç.

Матьăк ялсоветĕнчи агитколлектив та пултаруллăн ĕçлет. Ялсоветĕнчи колхозсем тырпулсене çапса пуçтарма тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума ик-виçĕ кун хушшинче 39.000 тенкĕ пуçса банка хыврĕç. Агитколлектив хăйĕн ĕçне колхозниксен активпа тачăн çыхăнса туса пырать, вăл активăн йышне ӳстерме тăрăшать. Хăйĕн пĕтĕм ĕçне вĕсем урлă туса пырать. «Красная Армия» колхозăн председателĕ П. Егоров хĕрӳллĕ агитатор, вăл хăй лайăх ĕçленипе колхозсене пример кăтартса пырать. П. Егоров юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 5.000 тенкĕ укçа пачĕ.

«Социализм» колхозăн бригадирĕ, краснофлотец арăмĕ Весновская — активлă агитатор, пултаруллă руководитель. Сталин юлташăн докладĕ çине ответлесе, унăн бригади ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăрт вĕçлеме обязательство илнĕ. Акă халĕ Весновская юлташăн бригади хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçларĕ. Тырпулсене тата вăрлăхлăх клевера пĕтĕмĕшпех çапса пуçтарчĕ, государствăна тырă парса татрĕ.

78 çулхи ватă колхозница Вера Савельева юлташ (унăн 4 ывăлĕ фронтра) Сталин юлташăн чĕнĕвĕ çине хĕрӳллĕн ĕçленипе ответлет. Вăл кăçал хăй пĕччен 120 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă тата халĕ те ĕçрен пĕр кун та юлмасть. Агитаторсем Сталин юлташăн докладне ăнлантарса панă хыççăн Буденный ячĕпе тăракан колхозăн членĕ Матрена Мышакова хăйĕн ирĕкĕпе вăрмана ĕçлеме кайрĕ.

А. ТРОФИМОВ,
ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн заведующийĕ.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшнă çĕрте

КУКЕÇ, декабрĕн 11-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем Совет государстви умĕнчи хăйсен малтанхи тивĕçне пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕрешрĕç. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне район государствăна тырă парас плана пурнăçларĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татас ĕçре колхозсем пĕр-пĕрине пулăшса ĕçлени пулăшрĕ. Юлса пыракан колхозсем те государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçларĕç. Абаш ялсоветĕнчи «Трудовик» колхозăн декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна 32 тонна тырă памалла пулнă. «Молния», «Урожай» колхозсем çак тырра хатĕрлев пунктне турттарса пама колхоза 36 лав панă, «Крахмал» колхозран 21 лав пынă. Кӳршĕри колхозсем пулăшнипе «Трудовик» колхоз та декабрĕн 9-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Талăкра 40—50 центнер тырă сăвăрать

ЕТĔРНЕ. Фронтра çĕнтерӳ тума кашни çын хăйĕн вырăнĕнче тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Фронт тылри ĕçсыннисене стахановла ĕçлеме, çĕнтерӳ ĕçне пĕтĕм вăя пама хушать.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра нумай колхозниксем колхоз производствинче пархатарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче Петр Федорович Куликов колхозник чи паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенни. Петр Федорович ватă ĕнтĕ, вăл 74 çула çитнĕ. Анчах ĕçе вăл никамран та хастарлăрах тăвать. Халь вăл колхозăн итемĕ çинче тырă сăвăрать. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр, вăйне шеллемесĕр ĕçлет вăл, талăкра 40—50 центнер тырра сăвăрса тасатать, ĕç нормине кулленех 200 процент тултарать.

Çак иртнĕ кунсенче Петр Федорович пĕччен пин пăт ытла выраш, 500 пăт тулă, 500 пăт пăрça сăвăрнă, 300 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе тунă.

Н. КОНДАКОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли

ВĂРМАР. Хоруйĕнчи «Пионер» колхоз членĕсем, Сталин юлташăн докладĕпе, Хĕрлĕ Çарăн Сталинград районĕнчи тата Центральнăй фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатрĕç. Çак кунсенче вĕсем 4 мăшăр çăматă, 3 мăшăр çăм носки, алшишсем, çĕлĕксем пухса пачĕç.

А. ИВАНОВ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

Фронтран пирĕн пата куллен нумай çыру килсе тăрать. Фронтовиксем çав çырусенче хăйсен тата кĕрешӳри тусĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ, орденлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисене фронта тата та вăйлăрах пулăшма чĕнеççĕ. Фронтовиксенчен хăшпĕрисем фашистла вăйсене [illegible] тылĕнче пулса, [illegible] курнисем çинчен каласа параççĕ. Ирсĕр тăшман пусмăрĕнче асапланакан пирĕн тăвансене хăвăртрах ирĕке кăларасшăн [illegible] кĕрешме чĕнеççĕ.

Куллен ӳссе, çирĕпленсе пырать фронтпа тыл çыхăнăвĕ. Фронт — тыла, тыл — фронта каласа парать. Çапăçу хирĕнчен килнĕ çырусем пысăк мар, анчах вĕсем [illegible] çунса тăраççĕ. Акă вĕсем:

1. НИМĔÇСЕМ ШКУЛСЕМПЕ СУТĔÇ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЕ ПĔТЕРЕÇÇĔ

Ку çырăва эпĕ тупăсен пăшал сассисем кĕрлесе тăнă вăхăтра çыратăп.

Хаклă тусăмсем! Çывăх та тăван Чăваш [illegible] килет. Манăн [illegible] пулса, [illegible] çапса парас килет.

Иртнĕ çултанпа фронтра пулса нумай тĕлĕнмелле япаласем куртăм эпĕ. Фашистсен ыснисем историре пулман тискерлĕхсем тăваççĕ. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапнипе каялла чакакан ирсĕрсен мĕнпур пурлăха шкулсемпе сутĕç учрежденийĕсене вут тĕртсе çунтарса хăвараççĕ. Нумай пулмасть эпир пĕр яла нимĕçсенчен хăтартăмăр. Захватчиксем шкул çуртĕн çӳлти этажне уборнăй, аялти этажне лашасене хупмалли вите тунă. Ял çыннисене асаплантарса вĕлернĕ, нумайĕшне хăйсен асаплă тыткăнне хăваласа кайнă.

Пĕррехинче тата фашистсене Дон шывĕ çывăхĕнчи 4 ялтан хĕссе кăлартăмăр. Пĕр ялĕ фашистсем хуçаланса пурăннă вăхăтра, темиçе талăк хушши çунса тăчĕ, кун хыççăн темĕн пысăкăш ялтан вунă кил çеç тăрса юлчĕ. Шкул вырăнĕнче — кăмрăк. Ялта виçĕ карчăкпа пĕр ача çеç сывă тăрса юлнă. Фашистсем ял çыннисене хăйсем патне тыткăна хӳтерсе кайнă, выльăх-чĕрлĕхĕсене пусса çисе пĕтернĕ. Çав ача-пионер халĕ пирĕнпе пĕрле çапăçать. Вăл Маша ятлă. Вăл [illegible] разведкăна [illegible] çапăçура [illegible] тет.

Тăван çĕршыва [illegible] фашизма хирĕç эпир [illegible] паттăррăн çапăçатпăр. Эпир лайăх пĕлетпĕр: пирĕн хыçра тăван çĕршыв, [illegible] атте анне. Эпир нимĕçсене [illegible] тăкнинчен пирĕн çĕршывăн кун-çулĕ [illegible] ирĕклĕ, никам пăхăнманлăхĕ килет. Çавăнпа эпир [illegible] тăватпăр.

Шкул ачисемпе пионерсем, эпĕ сире [illegible]

[illegible] 2565, минометсен [illegible] 2-мĕш рота.

Политрук заместителĕ
Л. АНДРЕЕВ.

2 АСЛĂ ПАРТИ РЕТНЕ КĔТĔМ

Акă ĕнтĕ, эпĕ иккĕмĕш çул тискер тăшманпа çапăçатăп. Сахал мар йывăр та хăрушă кунсем-çĕрсем пулчĕç.

Ман пуç урлă пульăсемпе снарядсем сахал мар шăхăрса иртрĕç. Юнашарах снарядсем çурăлса кайнă вăхăтра та эпĕ винтовкăна алăран вĕçертмен. Ирсĕр тăшман хăйĕн пуçне çĕр çумĕнчен çĕклессине эпĕ çивĕччĕн пăхса выртатăп.

Манăн винтовка тăшман чĕрине сахал мар çунтарнă. Тăван çĕршывшăн çирĕп тăнине кура мана халĕ парти членне илчĕç. Эпĕ — коммунист. Сĕмсĕр тăшмана хирĕç большевикла çапăçатăп.

Сирĕн хаçат урлă тăван республикăри мĕнпур юлташсене, паллакан хĕрачасене чĕререн ырă сунса хĕрӳллĕ салам яратăп. Эпир кунта, фронтра, чăваш халăхĕн ятне ямăпăр. Эсир те, тылри юлташсем, фронта куллен ĕçлĕн пулăшса пырăр.

Боец М. АНИСИМОВ.

Фронта пулăшассине вăйлатрĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 14-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хĕрлĕ Çарăн тавне тивĕç пулнă Тамбов тата Саратов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе хавхаланса, районри ĕçсыннисем фронта пулăшас ĕçе вăйлатрĕç. Алманчăри «12 лет Октября» колхозăн членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 10.000 тенкĕ укçа пухса государство банкне хыврĕç. Колхозниксем кунсăр пуçне оборона заводĕсенчи рабочисене хăйсен пахчисенче тунă çимĕçсене государство хакĕпе нумай сутрĕç. Декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне колхозниксем пĕр оборона заводĕнчи рабочисене пурĕ 30 центнер купăста, 15 центнер çĕрулми, 2,8 центнер сухан сутнă. Ку ĕçре уйрăмăнах Е. Борисов, М. Романова, Д. Николаева колхозницăсем палăрчĕç. Е. Борисов пĕр центнер çĕрулми, пĕр пăт купăста, М. Романова 3 пăт çĕрулми, 3 пăт купăста, 80 çулхи колхозница Д. Николаева (унăн виçĕ ывăлĕ фронтра) 2 пăт çĕрулми, пăт çурă купăста сутрĕç.

Фронта пулăшас тĕлĕшпе шкул ачисем те пархатарлă ĕç тăваççĕ. Карайри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 433 тенкĕ укçа пухнă. 5-мĕш класра вĕренекен К. Платонов çак ĕç валли 36 тенкĕ, 6-мĕш класра вĕренекен Антонов—30 тенкĕ, В. Данилов—21 тенкĕ, 3-мĕш класра вĕренекен М. Федоров—23 тенкĕ панă.

Р. ВАСИЛЬЕВА,
ХАТАЕВСКИЙ.

Малтисен примерне сарман

ТĂВАЙ, декабрĕн 12-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри «Красная Чувашия» колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 20.000 тенкĕ укçа пухнă. Çавăн пекех Молотов тата Ленин ячĕсемпе тăракан колхозсем те çак ĕç валли 12.000-шер тенкĕ пухнă. Анчах малта пыракан колхозсен примерне пур çĕрте те сарман-ха. Паянхи кун тĕлне районри 32 колхозран 28-шĕ çеç танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе хутшăннă. «Труд», «Красный Октябрь», «Заря» тата «Сталь» колхозсем халĕ те ку ĕç тулашĕнче тăраççĕ. Асăннă колхозсемпе ялсоветсен председателĕсен, партипе комсомол организацисен секретарĕсен ку ĕçре халех улшăну тумалла.

Г. КУРАШКИН.

Шкулти çамрăксене çар ĕçне вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

Тăван çĕршыв çамрăк ăрăва çирĕп шăм-шаклă, йывăрлăхсене çĕнме пултаракан хăюллă та паттăррăн çитĕнтерессишĕн тăрăшать. Çакна СССР Совнаркомĕ кăçалхи октябрĕн 24-мĕшĕнче шкул ачисене çар ĕçне вĕрентесси çинчен йышăннă постановлени уççăн çирĕплетсе парать. Çамрăксене шкул çулĕнчен пуçласах çар дисциплинине хăнăхтарса пымалла, çар ĕçне вĕрентмелле, çар çыннисем пек хăюллă та паттăр, çирĕп те тӳсĕмлĕ пулма, тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара юратма вĕрентмелле. Пĕлӳ тата сывлăх тĕлĕшĕнчен малта тăракан çамрăксенчен пирĕн чăн-чăн совет патриочĕсене хатĕрлемелле.

СССР Совнаркомĕ шкул ачисене çар ĕçне вĕрентесси çинчен постановление йышăннăранпа вăхăт нумай иртрĕ. Апла пулин те Комсомольскипе Пăрачкав районĕсенче шкулсем валли халĕ те военруксем тупса çитермен. Элĕкпе Вăрнар районĕсенче туллимар вăтам шкулсен 50 проценчĕ валли çеç военруксем пур.

Военруксем пулма отечественнăй аслă вăрçăн участникĕсене, запасра тăракан командирсене, спорт работникĕсене, лайăх физкультурниксене хăюллăнрах явăçтармалла. Ку ĕçре районсенчи тата хуласенчи сутĕç пайĕсене вырăнти военкоматсем ĕçлĕн пулăшма тивĕçлĕ, вĕсем чылай çĕрте çавăн пек тăваççĕ те. Ишлей райвоенкомачĕ, сăмахран, районри мĕнпур шкулсем валли военруксем çителĕклĕ таранах уйăрса панă, анчах районсутĕç пайĕ вĕсенчен виççĕшне çеç шкулсене ĕçлеме янă, ыттисене приказпа ĕçе илмен. Çавна пула вĕсем халĕ те ĕçе тытăнман. Тӳрех калас пулать, шкул ачисене çар ĕçне вĕрентес ыйтупа Ишлей райсутĕç пайĕ тата унăн заведующийĕ Гагарин юлташ сахал интересленеççĕ. Гагарин юлташран шкулти çамрăксене çар ĕçне вĕрентес ĕç мĕншĕн начар пулса пырать тесе ыйтсан, вăл пире: кĕçех вĕренӳ çулĕн пĕррмĕш чĕрĕкĕн итогĕсене сӳтсе-явма шкул директорĕсемпе заведующийĕсен канашлуне ирттеретпĕр, ун чухне вара, çула май, шкул ачисене çар ĕçне вĕрентесси çинчен те калаçатпăр, тесе ответлерĕ.

Ишлей районĕнчи шкулсенче çар ĕçне вĕрентесси питех те сӳрĕккĕн пулса пырать. Тивĕшри вăтам шкул директорĕ Мастеров юлташ шкул ачисене çар ĕçне вĕрентме эрнере миçе сехет панине те пĕлмест. Çавăнпа эрнере çар ĕçне 5 сехет вĕрентес вырăнне вăл 3 сехет çеç вĕренттерет.

Шкул ачисене çар ĕçне вĕрентес ыйтупа Чăваш АССР Наркомпросĕ те тивĕçлипе интересленмест. Вăл ку таринччĕнех районсене шкулсем валли çар ĕçне вĕрентме кирлĕ макетсемпе учебнăй винтовкăсем хатĕрлемелли разверсткăна ярса паман. Çавна пула чылай шкулсенче вĕренме кирлĕ хĕçпăшалсене хатĕрлеме тытăнман. Вĕренӳ программинче çар ĕçне вĕрентмелли сехетсен хисепĕ ӳснĕ пулсан та, Чăваш АСС республикинчи сутĕç халăх Комиссариачĕ учительсене ĕç-укçи ӳстерсе тӳлемелли çинчен кăтарту паман.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе туйса тăракан шкул директорĕсемпе заведующийĕсем шкулти çамрăксене çар ĕçне вĕрентес ĕçе лайăх организацилерĕç. Советски районри Мăн Чураш вăтам шкулĕнче (директорĕ Добрянский, военрукĕ Григорьев юлташсем) ачасене çар ĕçне вĕренме пулăшма ятарласа икĕ кабинет уйăрнă, унта çар кĕтесĕ тунă. Ачасем вăйĕпе 30 ытла винтовка [illegible] хатĕрленĕ. Анчах кун пек тĕслĕхсем республикăра сахал-ха.

Шкул ачисене çар ĕçне вĕрентессине уроксем хыççăн та туса пыма пулать. Кун валли шкулсенче çар ĕçне вĕренмелли кружоксем организацилемелле. Вăл кружоксенче Хĕрлĕ Çарăн хăшпĕр хĕçпăшалĕсене вĕренмелле, çар техникипе паллашмалла. Кунсăр пуçне çар кабинечĕсемпе физкультура залĕсем, спорт площадкисем, тирсемпе стрельбищĕсем тумалла. Вĕренекенсем отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчен аманса е отпуска таврăннă воинсемпе тĕл пулмалли вечерсене организацилемелле. Вăл вечерсене вĕренекенсем боецсенчен совет воинĕсен геройлăхĕ çинчен ыйтса пĕлме пултараççĕ, фронтовиксем—ачасем çар ĕçне мĕнле вĕреннипе паллашаççĕ. Кунсăр пуçне ачасемпе йĕлтĕрлĕ походсем, тактикăллă занятисем, çар вăййисем ирттермелле.

Халĕ пирĕн республикăри шкулсенче çар литератури çителĕксĕр. Шкул ачисен вăрçă ыйтăвĕсемпе вулас кăмăлĕ пысăк. Çавăнпа шкул библиотекисене çар литератури ытларах кӳрсе килес пулать. Шкулсенчи учебнăй винтовкăсене тирпейлесе йĕркене кĕртмелле. Кунпа пĕрлех вĕренекенсемпе пионерсен тата комсомолецсен вăйĕпе винтовка макечĕсем, чучелăсем, йывăç гранатăсем, йĕлтĕрсем хатĕрлес ĕçе анлăн сармалла.

Пионерсене çар ĕçне вĕрентес ĕçре пионер вожатăйĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен пионер отрячĕсенчи дисциплинăна çарти пек çӳлĕ пусăма лартассишĕн кĕрешмелле.

Республикăри шкулсенче çар ĕçне вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, ку ĕçе çӳлĕ пусăма лартмалла.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Гитлерла захватчиксен тискер ĕçĕсем çинчен Польша правительстви янă нота

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн Лондонри правительстви нота пичетлесе кăларнă. Нотăра Германие вăл Польша халăхне вĕлерсе пĕтерме тăрăшнишĕн айăпланă. Нотăра çапла каланă: Черчилль, Рузвельт тата Молотов хытă асăрхаттарнă пулин те, Германи правительстви вăйпа пусмăрлама тата террор тума чарăнман. Польша правительстви Польшăран питех те нумай çынсем илнĕ, вĕсем пусмăра лекнĕ халăхсене нимĕçсем асаплантарасси пĕрмаях вăйланса пынине кăтартса пăраççĕ. Польшăри еврейсем çавтери хăрушă лару-тăрăва лекнине юлашки пĕлтерӳсем уççăн кăтартса параççĕ. Юлашки уйăхсенче халăха массăллăн вĕлерес тĕлĕшпе çĕнĕ майсемпе усă курни Германи влаçĕсем Польшăри еврейсене пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтерес тесе хăйсен умне тĕллев лартнине кăтартса парать. Нотăра Гиммлер 1942 çулти март уйăхĕнче кăларнă декрета тĕплĕн илсе кăтартнă, çав декрет тăрăх 1942 çул вĕçленнĕ тĕле Польшăри пĕтĕм еврейсенчен 50 процентне вĕлерсе пĕтерме палăртнă. Нотăра çавăн пекех геттона питех те хаяррăн пĕтерсе тăкни çинчен, еврейсен совечĕн председателĕ Чэрняков хăйне хăй вĕлерни çинчен (Черняков кашни кунах 7.000-шер еврее тытса пама приказ илнĕ пулнă), «Вĕлэрмелли лагерьсене» ссылкăна яни çинчен кăтартса панă. Илнĕ сведенисем тăрăх, вĕлернисен хисепĕ темиçе пин çынна çитет; вăрçăччен Польшăра пулнă 3.130.000 еврейрэн юлашки 3 çул хушшинче пĕр миллион çын ытла вилсе пĕтнĕ. Поляксем хăйсем те питĕ пысăк асап тӳсеççĕ. Нумай миллионшар поляксене Германие чурасем пулса ĕçлеме илсе кайнă, чылайĕшне хăйсен килĕсемпе çĕр участокĕсенчен хăваласа кăларнă тата чылайĕшне вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Польша халăхĕ вăрттăн ĕçлекен организацисем урлă хăйĕн тарăхăвне пĕрре кăна мар кăтартса панă.

Итали хулисенчен халăх паникăна ӳксе тарать

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем декабрĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Турин çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсем хулара халĕ те сӳнмен. Пушарсене сӳнтернĕ çĕрте пожарниксен 25 процентне яхăн пĕтнĕ. Тепĕр кунне пожарниксенчен ытларахăш пайĕ, хăйсен çемьисемпе пĕрлех, хуларан тухса кайнă. Пушарсене сӳнтерме хулара шыв та çук.

Туринри халăха пĕтĕмĕшпех эвакуациленĕ. Сывлăшран килсе тапăннинчен хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен отрядсен составĕ те ытти халăхпа пĕрлех хуларан тухса кайнă. Хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен тухса каякан рабочисене вĕлермелле тăвасси çинчен Муссолини приказ кăларнă пулин те, рабочисем çаплах çĕнĕ вырăнсене куçа-куçа каяççĕ. Çурçĕр Италири мĕнпур промышленноçлă хуласенче паника саралнă. Бомбăсем пăрахман хăшпĕр хуласенчи предприятисенче те, рабочисем тарнă пирки тата транспорт пăсăлса кайнă пирки, ĕç чарăнса ларнă.

СТАМБУЛ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англи авиацийĕ Итали хулисем çине тапăнса çавтери вăйлăн ишĕлтернине, хуласенче пурăнакан халăхсем паникăна ӳкнине Венгри пичечĕ те йышăнать. Çапла, «Пестер Ллойд» хаçат Туринра, Миланра тата Италин ытти хулисенче çавтери вăйлă ишĕлӳсем пулни çинчен çырать. «Туринăн тĕп урамĕсенчен пĕри,—тесе пĕлтерет хаçат,—чул купи пулса юлнă. Çав хула кварталĕ-кварталĕпе ишĕлнĕ. Ишĕлнĕ е çунса кайнă çуртсене пур çĕрте те курма пулать. Çав хуласенчи халăхсене эвакуацилес ĕçе йĕркелемен. Транспорт питех те çителĕксĕрри палăрать. Турин, Милан тата бомбăсем пăрахса аркатнă ытти хуласем хăрушла картинăсем пулса тăраççĕ, çав факта пытарма ĕнтĕ нимĕнле сăлтав та çук».

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Швейцарин Рио-де-Жанейро хулине пынă морякĕсем Англи бомбардировщикĕсем Генуя хули çине аркатмаллах пыра-пыра тапăнни çинчен каласа панă. Çав моряксем Рио-де-Жанейрона пынă судно Генуяра темиçе кун хушши чарăнса тăнă, çакă вăл порт сиенленнĕ пирки пулнă. Англи самолечĕсем хула çине пырса тапăннине моряксем хăйсен куçĕпе курнă. Бомбăсем тĕл лекнĕ те портри сооруженисене аркатса пăрахнă. Генуяра бомбоубежищĕсем сахал тата сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас ĕçе те начар йĕркеленĕ. Халăх вăрçăпа питех те ывăнса çитнĕ. Тапăну вăхăтĕнче халăх урамсенче: «Эпир миршĕн!» тесе кăшкăрнă. Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сывлăшран пырса тапăнас хăрушлăх умĕнче тăракан районсенчен рабочисем тарнине чарса лартас шутпа Италири чугун çулсем билетсене ятарласа ирĕк панă тăрăх кăна сутасси çинчен пĕлтернĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх. Тунисра Германин пехоти хĕвеланăçнелле куçса пырать, вăл халь Меджез-Эль-Бабпа Матер хушшинчи çурма-çула çитнĕ.

Андэрсон генералăн пĕррмĕш армийĕ Меджез-Эль-Баба хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăрать тата Германи войскисен çав районра çĕнĕрен пуçласа янă атакисене вăйлăн сире-сире ярать. Тĕнĕл держависен войскисен вăйĕ малтанхи икĕ атака чухнехинчен чылай чакнă. Çав малтанхи атакăсенче нимĕçсене хăйсен тĕллевĕ патне пĕр миля çывăха пырса çитсен каялла сирсе янăччĕ. Меджез-Эль-Бабшăн пыракан çапăçăвĕн пĕррмĕш тапхăрĕнче поражени тӳссе, нимĕçсем хăйсен бронетанковăй войскисене çуррине яхăн çухатнă.

Пулас çапăçусем Тунисра вăрçма тытăннăранпа чи хаяр çапăçусем пулаççĕ пуль тесе шутлаççĕ. Çурçĕр Африкăра союзниксен вăйĕсем ӳссе пыраççĕ, противникăн çулĕсем, вĕсем Англипе Америкăн çулĕсенчен кĕскерех пулсан та, пысăк хăрушлăхра тăраççĕ, вĕсене чылай сиенленĕ ĕнтĕ.

«Таймс» хаçат Тунисри операцисенче истребительсем пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса парать. Союзниксен истребителĕсем çителĕксĕр пулни пирки юлашки эрнесенче вĕсен войскисене сывлăшран питĕ хаяррăн пыра-пыра атакăланă. Халĕ союзниксем унта истребительсем нумай илсе пыраççĕ, анчах та союзниксем сывлăшра пуçпулса тăрайман-ха.

Вăтаçĕр тинĕсре Англин подводнăй лодкисем тĕнĕл держависен Тунисри чаçĕсем валли войскăсемпе продовольстви илсе пыракан 4 суту-илӳ суднине торпэда ярса путарнă.

Декабрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле кăнтăрта, Джанетăран инçе мар вырăнта (Джанеты-Алжирпа Триполитани чиккинче) француз войскисем противникăн тĕреклетнĕ паха позицийĕсене тытса илнĕ.

Ливире Англин малти чаçĕсем противникăн Эль-Агейла патĕнчи оборонине çапăçса сăнанă. Авиаци Неаполе, Триполине, Палермона тата Тунисри доксене тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Техно-ткацкой фабрике требуются: начальник охраны, бухгалтер, электро-монтеры, столяра, политники, возчики, снабженцы, охранники.

Принимаются на переквалификацию взрослые и подростки от 14-ти лет по специальностям: ткачихи, мотальщицы, браковщицы и др. Срок обучения от 2-х недель до 1 месяца.

При фабрике работает столовая и хлебно-промтоварный ларек.

Адрес: пос. Волгостроя, помещ. Черепичного з-да. Телефон 7—46.

ЧУВАШСПЕЦТОРГУ требуются на постоянную работу: сапожники, портные, возчики-конюха и уборщица.

Обращаться по адресу: ул. Калинина, дом № 51.

Требуются сапожники для работы по вольному найму в военном учреждении.

Обращаться: г. Чебоксары, ул. Плеханова, 7.

ОТКРЫТА ПОДПИСКА

на газеты и журналы на 1943 год.

Подписка принимается во всех почтовых отделениях, агентствах, письмоносцами на предприятиях, в учреждениях и организациях через общественных распространителей печати.

Последний срок сдачи подписки 20 декабря 1942 г.

СОЮЗПЕЧАТЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11830 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.